28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
7
ШАМАТКУН
66(6817) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 4-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 4-мӗшӗнче Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнче, НОВЫ ТАРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем Чехословаки ҫарӗсемпе пӗрле наступлени туса пыраҫҫӗ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—СЛАНИЦА, НАМЕСТОВО, МУТНЕ, БРЕЗА, ЛОКЧА, ГРУСТИН, ПРИБИШ, ВЕЛИКАЯ БОРОВЕ, СВЯТОЙ МИКУЛАШ, СЕЛНИЦА, БОДИЦЕ ПАЛУДЗА ятлӑ пысӑк ялсем тата ПОДБЕЛЬ, СЕДЛЯЦКА ДУБОВА чугун ҫул станцийӗсем.

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем апрелӗн 4-мӗшӗнче Словакин паха промышленность центрӗпе тӗп хули пулса тӑракан БРАТИСЛАВАНА—ҫулйӗрсен пысӑк узелне тата нимӗҫсен Дунай ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата Чехословаки ҫӗрӗнче халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ГАНДЛОВА, НОВАЯ ЛЕГОТА, ОСЛАНЫ, ВЕЛИКИЕ ОСТРАТИЦЕ, ПЕШТЯНЫ, ТРЕБАТЫЦЕ, ДЕГТИЦЕ, НАДАШ, РАЧИШТОРФ ятлӑ пысӑк ялсем тата ГАНДЛОВА, ЛИБАНЫ, ПЕШТЯНЫ чугун ҫул станцийӗсем. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем БРАТИСЛАВАРАН ҫурҫӗртерехре кӗҫӗн Карпат тӑвӗсем урлӑ каҫса кайнӑ та ҫав тусенчен хӗвеланӑҫнерехре РАРБОК, КУХЫНЯ, ПЕРНЕК, МАРИАНКА ялӗсене туртса илнӗ. Апрелӗн 3-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 4.600 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

ВЕНАРАН кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах малалла тапӑнса пынӑ, тӑшманпа ҫапӑҫса, БАДЕН хулине тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ПУРБАХ, БРАЙТЕНБРУНН, МАННЕРСДОРФ, ЗОММЕРАЙН, ГЕТТЕНДОРФ, ВИНЕРХЕРБЕРГ, ГИМБЕРГ, ЦВЕЛФАКСИНГ (ВЕНАРАН 8 километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре), ГААДЕН, ХАЙЛИГЕНКРОЙЦ, ГРОССАУ, САНКТ ФАЙТ ятлӑ пысӑк ялсем. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах БАЛАТОН кӳллинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре фронт ҫарӗсем, Болгари ҫарӗсемпе пӗрле кӗрешсе, Венгрин кӑнтӑр-хӗвланӑҫ пайне тӑшмантан тасатса пӗтернӗ тата Югослави ҫӗрӗнче РОГАЧЕВЦЫ, ДОМАЙИНЦИ, СКАТОВЦЫ, ЛИПОВЦИ, ГАНЧАНИ, ПИНЦЕ, ХОДОШАН, ГОРИЧАН, ДОЛЬНИ МИХАЛЕВЕЦ ялӗсене туртса илнӗ. Апрелӗн 3-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 9.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ, тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—142, танксем—42, бронетранспортерсем—25, хир тупписем—115, пулеметсем—484, автомашинӑсем—300, паровозсем—42, вагонсем—680, боеприпас, хӗҫпӑшал тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—17.

Мартӑн 16-мӗшӗпе апрелӗн 4-мӗшӗ хушшинче наступлени туса пырса, УКРАИНАРИ 2-мӗш фронтпа 3-мӗш фронт ҫарӗсем нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗм Венгри ҫӗрне ирӗке кӑларнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Апрелӗн 3-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 26 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 29 самолетне персе ӳкернӗ.

АПРЕЛӖН 5-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 5-мӗшӗнче ГДЫНЯ хулинчен ҫурҫӗртерехре БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем нимӗҫ ҫарӗсен ПУТЦИГЕР ВИК заливӗ хӗррине хӗстерсе лартнӑ ушкӑнӗн юлашкийӗсене пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ, ОКСХЕФТ, ОБЛУШ, АЛЬТ-ОБЛУШ, ПОГОРШ, НОЙ-ОБЛУШ, БАБИ-ДУЛ, КОССАКАУ, ПИРВОШИ, БРЮКК, МЕХЛИНКЕН, РЕВА ялӗсене туртса илнӗ.

БРЕСЛАУ хули районӗнче хупӑрласа илнӗ нимӗҫ ҫарӗсен ушкӑнне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем апрелӗн 5-мӗшӗнче Чехословаки ҫарӗсемпе пӗрле РУЖОМБЕРОК хулине—ҫулсен паха узелне тата нимӗҫсен Чехословаки ҫӗрӗнчи Ваг шывӗ ҫинчи оборонин тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех ЖИВЕЦ хулине тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—ЮШИНА, НОВОТЬ, ЛОМНА, КНЯЖЯ; ДОЛЬНЫ КУБИН, ЯСЕНОВА ятлӑ пысӑк ялсем.

УКРАИНАРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, апрелӗн 5-мӗшӗнче МАЛАЦКИ тата БРУК хулисемпе чугун ҫулсен паха узелӗсене туртса илнӗ, ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем Румыни ҫарӗсемпе пӗрле ПРЕВИДЗА хулипе БАНОВЦЕ хулине—нимӗҫсен Карпат тӑвӗсен тӑрӑхӗнчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене—ҫапӑҫса туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра—СКЛЕНЕ, БРЕЗАНЫ, БОЙНИЦЕ, КОШ, НОВАКИ, ТКАЧАНЫ, ЗАВАДА, БИКСАРД, СОЛОШНИЦА, ЗОГОР, СТУПАВА, ЛАМАЧ, ВИДРИЦА, ПЕТРЖАЛКА, ВОЛЬФСТАЛЬ, ГАЙНБУРГ, РОРАУ ятлӑ пысӑк ялсем тата СКЛЕНЕ, НОВАКИ, ЗЕМЛЯНСКЕ; КОСТОЛАНЫ, СОЛОШНИЦА, ЗОГОР, СТУПАВА, ЛАМАЧ чугун ҫул станцийӗсем. БРАТИСЛАВА хулишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче апрелӗн 4-мӗшӗнче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 2.500 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: хир тупписем—150, минометсем—65, пулеметсем—361, паровозсем—82, чугун ҫул вагонӗсем—1.681, боеприпас, хӗҫпӑшал тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—71.

ВЕНА хули енче УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, РАУХЕНВАРТ, УНТЕР ЛАА, ОЬЕР ЛАА (ВЕНАРАН 4 километр кӑнтӑртарахра), ЛАКСЕНБУРГ, ГУНТРАМСДОРФ, ГУМПОЛЬДСКИРХЕН, ХОХРОТЕРДОРФ, БРАЙТОНФУРТ ялӗсене туртса илнӗ та ВЕНА хулипе ЛИНЦ хули хушшинчи автострадӑна татнӑ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт ҫарӗсем, Болгари ҫарӗсемпе пӗрле наступлени туса пырса, БАЛАТОН кӳллинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре Югослави ҫӗрӗнче ДОЛЬНИ ЛЕНТАВА хулине тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—НЕТАРОВЦЫ, МОСТЬЕ, ПЕТИШОВЦИ, ПОДТУРЕК, МАЛАЯ СУБОТИЦА ятлӑ пысӑк ялсем.

Апрелӗн 4-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче фронт ҫарӗсем тӑшманӑн 6.500 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—43, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—31, бронетранспортерсем—26, хир тупписем—148, пулеметсем—440, автомашинӑсем—150, паровозсем—42, чугун ҫул вагонӗсем—760, боеприпас, хӗҫпӑшал тата апат-ҫимӗҫ склачӗсем—28.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Апрелӗн 4-мӗшӗнче нимӗҫсен 22 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата артиллери тӑшманӑн 15 самолетне персе ӳкернӗ.

Совет Союзӗпе Япони хушшинче нейтралитет ҫинчен тунӑ килӗшӗве пӑрахӑҫа кӑларасси ҫинчен

Апрелӗн 5-мӗшӗнче кӑнтӑрла иртсен 3 сехетре СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов Япони Посолне Н. Сато господина йышӑннӑ та Совет Правительстви ячӗпе ӑна ҫапла каланӑ:

«Совет Союзӗпе Япони хушшинчи нейтралитет ҫинчен калакан Килӗшӗве 1941 ҫулхи апрелӗн 13-мӗшӗнче, урӑхла каласан, Германи Совет Союзӗ ҫине тапӑниччен тата пӗр енчен Япони, тепӗр енчен Англипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хушшинчи вӑрҫӑ тухиччен тунӑ.

Вӑл вӑхӑтранпа лару-тӑру тӗпренех улшӑннӑ. Германи ССР Союзӗ ҫине тапӑннӑ, Япони вара, Германин союзникӗ, Германие ССР Союзне хирӗҫ вӑрҫма пулӑшать. Кунсӑр пуҫне Япони США-па Англие хирӗҫ, Совет Союзӗн союзникӗсем пулса тӑраканскерсене хирӗҫ, вӑрҫать. Ӗҫсем ҫакӑн пек пулса пынӑ пирки, Японипе Совет Союзӗ хушшинче нейтралитет ҫинчен тунӑ килӗшӳ хӑйӗн тӗллевне ҫухатрӗ, тата ҫав килӗшӳ срокне малалла тӑсма май ҫук пулса тӑчӗ.

Ҫӳлте каланине шута илсе тата асӑннӑ Килӗшӗвӗн 3-мӗш статьипе, Килӗшӗвӗн пилӗкҫуллӑх срокӗ тухиччен пӗр ҫул малтан пӗлтерсе пӑрахӑҫа кӑларма право паракан статьипе, килӗштерсе, Совет Правительстви 1941 ҫулхи апрелӗн 13-мӗшӗнче тунӑ Килӗшӗве пӑрахӑҫа кӑларма хӑй кӑмӑл туни ҫинчен Япони Правительствине пӗлтерет».

Япони Посолӗ Н. Сато господин Совет Правительстви пӗлтернине Япони правительствине каласа пама пулнӑ.

Перекет кассисене хунӑ укҫасем тӑрӑх выляв пулать

Чӑваш АССР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Чӑваш республикинчи перекет кассисене хунӑ укҫасем тӑрӑх Шупашкар хулинче апрелӗн 10-ӗнче 5-мӗш выляв пулса иртет.

Ҫав вылява ирттерме комисси тунӑ. Комиссие ҫаксем кӗреҫҫӗ: Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ В. В. Таврин юлташ (Комисси председателӗ), Чӑваш республикинчи Перекет кассисемпе госкредит управленийӗн начальникӗн заместителӗ М. Ф. Веселов юлташ (Комисси председателӗн заместителӗ), членсем—А. П. Немцева, Г. П. Платонов, К. Ф. Обухова, М. Г. Смирнова, А. А. Самохвалова, В. И. Лебедева тата К. И. Будников.

Югославири Министрсен Совечӗн Председателӗ Тито маршал тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Шубашич господин Мускава килни

Апрелӗн 5-мӗшӗнче Югославири Министрсен Совечӗн Председателӗ Иосип Броз-Тито маршал Мускава килнӗ. Унпа пӗрле Югославин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ И. Шубашич господин, Черногори Ӗҫӗсен Министрӗ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илӳпе Снабжени Министрӗ Н. Петрович господин, Сӑрт-ту промышленноҫӗн Министрӗ Б. Андреев господин, Югославин СССР-ти Ҫар Миссийӗн Начальникӗ Р. Приморац генерал-лейтенант килнӗ.

И. Броз-Тито маршалпа пӗрле Совет Союзӗн Югославири Посолӗ И. В. Садчиков тата Совет Союзӗн Югославири Ҫар Миссийӗн Начальникӗ А. Ф. Киселев генерал-майор килнӗ.

Центральнӑй аэродромра И. Броз-Тито маршала тата унпа пӗрле килнӗ ҫынсене ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председатель Заместителӗ тата СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, Хӗрлӗ Ҫарӑн Генеральнӑй Штабӗн Начальникӗ армии генералӗ А. И. Антонов, Ф. И. Голиков генерал-полковник, Мускав хула Совечӗн Председатель Заместителӗ М. А. Яснов, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа Отделӗн Заведующийӗ А. А. Лаврищев, Мускав хули коменданчӗ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, А. С. Гундоров генерал-лейтенант, СССР Наркоминделӗн Протокол Отделӗн Заведующийӗн Заместителӗ Г. И. Фомин тата ыттисем те.

Аэродромра дипломатиллӗ корпус пулнӑ.

Кӗтсе илнӗ ҫӗрте хисеплӗ хурал тӑратнӑ тата Югославипе Совет Союзӗн государство гимнӗсене каланӑ. Аэродрома Югославипе Совет Союзӗн ялавӗсене ҫакса илемлетнӗ.

Тито маршал калани

Ӗнер, апрелӗн 5-мӗшӗнче, Мускава килнӗ Тито маршал аэродромра микрофон умӗнче ҫапла каланӑ:

«Германи оккупанчӗпе унӑн квислингӗсене хирӗҫ пыракан йывӑр кӗрешӳре Югослави халӑхӗсене парса тӑнӑ тата халӗ те парса тӑракан ҫав тери пысӑк пулӑшушӑн Совет Союзне паян Аслӑ Совет Союзӗн столицинче хӗрӳллӗн саламласа чун-чӗререн тав тума пултарнӑшӑн эпӗ питӗ савӑнатӑп. Пирӗн Югослави те Германи ирсӗрлӗхӗнчен пӗтӗмпех тасалас сехет ҫывхарса ҫитрӗ. Ҫӗнтерӳ ҫывӑх ӗнтӗ. Эпир ҫӗнтересси темиҫе кун анчах юлчӗ, уйӑхран ытла мар.

Сывӑ пултӑр аслӑ Совет Союзӗ!

Сывӑ пултӑр никам ҫӗнтерейми аслӑ Хӗрлӗ Ҫар тата унӑн генилле ҫулпуҫӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин господин!

Фашизма—вилӗм, халӑха—ирӗклӗх!»

Грузинсен пӗрремӗш кӗнеки тухнӑранпа 240 ҫул тултарать

240 ҫул каярах, 1705-мӗш ҫулхи апрель уйӑхӗнче, грузин чӗлхипе пӗрремӗш кӗнеке тухнӑ. Ана грузинсен Мускаври пӗрремӗш типографийӗнче пичетленӗ. Типографие грузи патши II-мӗш Арчил тата унӑн ывӑлӗ Александр (I-мӗш Петр ҫарӗнчи артиллери генералӗ) тунӑ пулнӑ. Ана тунӑ хыҫҫӑн 4 ҫул иртсен, Грузин тепӗр патши VI-мӗш Вахтанг Тбилиси хулинче типографи уҫнӑ. Кӗнеке пичетлес ӗҫе аталантарас тӗлӗшпе ҫав типографи Грузире кӑна мар, пӗтӗм Кавказра паллӑ вырӑн йышӑннӑ. Ҫав типографире 1712 ҫулта Шота Руставели ҫырнӑ «Витязь в тигровой шкуре» ятлӑ аслӑ поэмӑна пичетлесе кӑларнӑ.

Грузинсен пӗрремӗш кӗнеки Мускавра тухнине Грузи общественноҫӗ грузинпа вырӑс халӑхӗсен авалхи культурисем пӗр-пӗринпе таччӑн ҫыхӑнса тӑнине кӑтартакан япала вырӑнне шутласа паллӑ тӑвать. Юбилей тӗлне Тбилисири Карл Маркс ячӗпе тӑракан библиотека выставка уҫнӑ. Выставкӑра грузинсен авал пичетленӗ кӗнекисене нумай курма пулать. (ТАСС).

Уралри ҫӗнӗ гидроэлектростанци

Вӑйлӑ юхакан Нейве шывӗ ҫинче Уралти ҫӗнӗ ГЭС-а—Алапаевскри гидроэлектростанцие туса ҫитерчӗ. Кӗске срокрах певен пӗрремӗш черетне, станци ҫуртне тата ытти объектсене туса ҫитерчӗ. Оборудовани тата икӗ турбинӑна Уралти машинӑсем тӑвакан заводсенче туса хатӗрленӗ. (ТАСС).

Вӑкӑрсене ӗҫе вӗрентеҫҫӗ

ВАРНАР. «Волонтер» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем ку таранччен 7 вӑкӑра ӗҫлеме вӗрентнӗ. Вӑкӑрсем ялхуҫалӑх ӗҫӗнче пысӑк усӑ панине шута илсе, ҫуракине тухиччен тепӗр 7 вӑкӑра ӗҫе вӗрентме тытӑннӑ.

Кӑҫалхи ҫуракине пурӗ 14 вӑкӑр хутшӑнмалла. Ҫапла вара ялхуҫалӑх ӗҫӗсене туса пыма колхозӑн туртӑм вӑйӗ ҫителӗклӗ пулать.

А. КУЗЬМИН.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитетӗнче

Государствӑн колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатмалли 1945 ҫулхи планӗ ҫинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна палӑртаҫҫӗ: 1944 ҫулта, колхозсемпе совхозсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Колхозсемпе совхозсем государствӑна аш-какай памалли хӑйсен обязательствисене пӗтӗмӗшпех тултарчӗҫ тата ҫакӑнпа пӗрлех выльӑх-чӗрлӗх йышне малалла ӳстерме пултарчӗҫ. Колхозсен фермисенчи мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышӗ 9 процент, сурӑхсемпе качакасен йышӗ 3 процент, сыснасен йышӗ 8 процент чухлӗ ӳсрӗ. Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсенче мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышӗ 12 процент, сыснасен йышӗ 56 процент, сурӑхсен йышӗ 14 процент чухлӗ ӳсрӗ. Ҫавӑн пекех колхозниксемпе рабочисем тата служащисем хӑйсен килӗсенче тытакан выльӑх-чӗрлӗхсен йышӗ те ӳснӗ. 1944 ҫулта колхозсем 1943 ҫулхинчен 11,6 миллион тонна е 19,5 процент ытларах шултӑра апат ҫулса пуҫтарнӑ тата силос 15,5 миллион тонна вырӑнне 17,3 миллион тонна хывса хӑварнӑ, ҫакӑ вӑл 1943 ҫулхинчен 12 процент ытларах пулать.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре Мускав облаҫӗнчи, Азербайджан ССР-чи, Дагестан АССР-чи, Казах ССР-ӗн Гурьевпа Караганда облаҫӗсенчи, Татжик, Армян, Туркмен ССР-ӗсенчи, ҫавӑн пекех тата нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑ Украина ССР-ӗн Киев, Полтава, Сталино, Ворошиловград облаҫӗсенчи колхозсемпе совхозсем уйрӑмах пысӑк ҫитӗнӳсем тунине палӑртаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна та палӑртаҫҫӗ: хӑшпӗр облаҫсемпе крайсенчи тата республикӑсенчи, уйрӑмӑн илсен, Иркутск, Молотов, Омск, Куйбышев облаҫӗсенчи, Бурят-Монгол, Башкир, Тутар тата Чӑваш АССР-ӗсенчи советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсем 1944 ҫулта государствӑн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли планне пурнӑҫа кӗртеймерӗҫ, колхозсемпе совхозсенчи мӗнпур тӗрлӗ выльӑх-чӗрлӗхсен, уйрӑмах лашасемпе мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсен йышне чакарса ячӗҫ.

Советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсем колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне сыхласа хӑварас тата малалла ӳстерес тӗлӗшпе йышӑнакан мерӑсене СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫителӗксӗр тесе шутлаҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи условисенче, автомашинӑсемпе тракторсен тата лашасен хисепӗ чакнӑ пирки лашасене ӗҫ ытларах тивнине кура, советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсен руководителӗсем, колхоз председателӗсемпе колхозниксем лашасене лайӑхрах пӑхса усрани тата вӗсемпе ӗҫре усӑ курасси ҫине тимлӗнрех ҫаврӑнса пӑхни кирлӗ пулнӑ. Анчах та ун вырӑнне нумай облаҫсемпе крайсенче тата республикӑсенче советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсем лашасем ӗрчетес ӗҫ ҫине сӳрӗккӗн пӑхма пуҫланӑ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ нумай колхозсемпе совхозсенче ама выльӑхсен пысӑк йышӗ хӗсӗр юлни выльӑх-чӗрлӗх хисепне хӑвӑртрах ӳстерме чӑрмантаракан пысӑк чӑрмав пулса тӑрать тесе шутлаҫҫӗ, ҫавна пула вара колхозсемпе совхозсем ҫулсеренех ҫамрӑк выльӑхсен пысӑк йышне илеймесӗр юлаҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗхе япӑх пӑхса усранипе япӑх тӑрантарнине пула чылай облаҫсенчи колхозсемпе совхозсенче нумай выльӑх-чӗрлӗх вилсе пӗтет.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫе хакламанни советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсен нумайӗшӗсен выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетессине ертсе пырас ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхӗ пулса тӑрать тесе палӑртаҫҫӗ. Чылай облаҫсемпе крайсенче тата республикӑсенче колхоз фермисенчи ӗнесем сӗт сахал параҫҫӗ, сурӑхсенчен ҫӑм сахал илеҫҫӗ. Ҫавӑн пекех тата хӑшпӗр колхозсемпе совхозсем выльӑхсене кӗтӳре ҫӳретсе самӑртас ӗҫе япӑх организациленӗ пирки те чылай пысӑк тӑкаксем тӳсеҫҫӗ. Государствӑна вӑтам ӳтпӳллӗ е ырхан выльӑхсем парса, вӗсем ҫак ӗҫ валли мӑнтӑр выльӑхсем панӑ чухнехинчен нумайрах выльӑх-чӗрлӗх расходласа пӗтереҫҫӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫакна палӑртаҫҫӗ: колхозсемпе совхозсенче апат-ҫимӗҫ базине вӑйлатас ӗҫ халӗ те выльӑх-чӗрлӗх йышӗ ӳснинчен кая юлса пырать-ха, ҫакӑ вара вӑл выльӑх-чӗрлӗх йышне тата уйрӑмах унӑн тухӑҫлӑхне хӑвӑртрах ӳстерме чӑрмантарать. Акнӑ курӑксемпе улӑх утисене кая юлса ҫулса пуҫтарни пысӑк ҫитменлӗх пулса тӑрать, ҫавна пула апат-ҫимӗҫсемпе улӑх утин пахалӑхӗ чакать. Чылай облаҫсемпе крайсенчи тата республикӑсенчи колхозсемпе совхозсенче выльӑх-чӗрлӗх валли сӗткенлӗ апатсем—силоспа тымарҫимӗҫсем хатӗрлес ӗҫ ҫаплах ҫителӗксӗр пулса пырать-ха.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсен 1945 ҫулхи тӗп задачи—колхозсемпе совхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен йышне малалла ӳстересси, выльӑх-чӗрлӗхсен тухӑҫлӑхне пур енчен те ӳстерсе пырасси, ама выльӑхсем хӗсӗр юлассине тата выльӑхсем вилнине пӗтересси, выльӑх-чӗрлӗх валли апат-ҫимӗҫ базине малалла сарса ҫирӗплетсе пырасси пулса тӑрать тесе шутлаҫҫӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ советпа парти тата ҫӗрӗҫ органӗсене, колхозсен председателӗсене, совхозсен директорӗсене лашасем ӗрчетес ӗҫ ҫине тимлӗхсӗр пӑхнине — государствӑпа колхозсене сиен кӳрекен ҫак тимсӗрлӗхе пӗтерме хушаҫҫӗ тата лашасем вилессине чарса лартас, лашасем валли лайӑх апат-ҫимӗҫсем ҫителӗклӗ хатӗрлесе пырас, лашасене пӑхас тата ӗҫлеттерес ӗҫри обезличкӑна пӗтерес, кашни колхозӑн ялхуҫалӑх ӗҫӗсемпе ытти ӗҫсене вӑхӑтра туса ирттерме чӗрӗ туртӑм вӑйӗ ҫителӗклӗ пултӑр тесе, лашасен йышне анлӑн ӳстерсе пырас тӗлӗшпе халех ҫирӗп мерӑсем йышӑнма хушаҫҫӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ ҫапла йышӑннӑ:

1. ЛАШАСЕМ ӖРЧЕТЕС ЕНӖПЕ

1. Государствӑн колхозсенче лашасем ӗрчетмелли 1945 ҫулхи планне лашасен йышне 5 процент чухлӗ ӳстермелле туса ҫирӗплетес.

2. Государствӑн лашасем ӗрчетмелли 1945 ҫулхи планне СССР Совхозсен Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсем тӑрӑх лашасен хисепне 7 процент чухлӗ, СССР Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсем тӑрӑх—7 процент чухлӗ, СССР Аш-какайпа сӗт-ҫу промышленность Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсем тӑрӑх—15 процент чухлӗ, Тулашри суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗн совхозӗсем тӑрӑх—24 процент чухлӗ тата промышленность Халӑх Комиссариачӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсем тӑрӑх 23 процент чухлӗ ӳстермелле туса ҫирӗплетес.

3. 1945 ҫулта лаша заводӗсенчен ӑратлӑ ӑйӑрсем сутмалли плана тата ӑратлӑ ӑйӑрсене облаҫсенчен облаҫсене куҫармалли плана ҫирӗплетес.

4. Лашасен йышне хӑвӑртрах ӳстерес тата лайӑх пахалӑхлӑ лашасем пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫе организацилес шутпа, СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене 10 кӗсререн ытларах тытакан колхозсенче лаша фермисем организацилеме хушас, ҫав фермӑсене вара хӑмлама юрӑхлӑ мӗнпур кӗсресене, ҫавӑн пекех тата амӑшӗсенчен уйӑрнӑ мӗнпур тихасене пӑхса ҫитӗнтерме памалла тӑвас.

5. Лашасене ҫеҫен-хирсенче кӗтӳпе пӑхса усрас ӗҫе лашасен хисепне хӑвӑрттӑн ӳстерме май паракан пысӑк ӗҫ вырӑнне хурса, СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне, Казах, Киргиз, Татжик, Узбек, Армян, Грузин, Азербайджан ССР-ӗсен Совнаркомӗсемпе компартисен Центральнӑй Комитечӗсене, Башкир, Бурят-Монгол, Якут, Дагестан, Кабарда, Ҫурҫӗр Осетин, Тутар АССР-ӗсен Совнаркомӗсемпе ВКП(б) обкомӗсене, Алтай, Красноярск, Краснодар, Ставрополь крайӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) крайкомӗсене, Челябинск, Чкалов, Чита, Новосибирск, Омск, Ростов, Грозный, Сталинград тата Астрахань облисполкомӗсемпе ВКП(б) обкомӗсене колхозсенчи лашасен пӗр пайне кӗтӳре пӑхса усрамалла тума хушас.

Тивӗҫлӗ облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикӑсен Совнаркомӗсене лашасене кӗтӳпе пӑхса усрамалла тумашкӑн кӗтӳ ҫӳретме юрӑхлӑ участоксем ҫӗнӗрен уйӑрса пама, 1945 ҫулта Госфондӑн ҫӗрӗсем ҫинчи халиччен кӗтӳ ҫӳретмен вырӑнсене тӗрӗслесе тухма тата вӗсене районсемпе колхозсене ҫирӗплетсе пама, мӗнпур лашасем валли шӑвармалли вырӑнсем ҫителӗклӗ пулса пама хушас. Лашасене хӗллехи вӑхӑтра та кӗтӳре тытмалла тунӑ чухне, лаша кӗтӗвӗсем ҫӳрекен хӗллехи вырӑнсенче апат-ҫимӗҫсен ҫулран-ҫула куҫакан страховой фончӗсене уйӑрмалла, лашасене хупса усрама ҫӑмӑл майсемпе лупасайсем туса хатӗрлемелле, ҫавӑн пекех тата лашасене пӑхакан кӗтӳҫӗсем валли пурӑнмалли ҫуртйӗрсем, культурӑпа йӑла тӗлӗшӗнчен тивӗҫлӗ условисем туса памалла.

6. Колхозсенчи планран ытлашши лашасене урӑх колхозсене сутма чарнине тӗрӗс мар тесе шутлас. Ҫав йӗрке вӑл колхозсене сутлӑх лашасем пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫре хавхалантармасть тата ҫавна пула, колхозшӑн лашасем ӗрчетни усӑллӑ мар пулса тӑрать.

Колхозсене ҫапла тума ирӗк парас: лашасем ӗрчетмелли государство планне ирттерсе тултаракан колхозсем, государствӑна нарядсем тӑрӑх лашасем сутмалли хӑйсен обязательствисене тултарнӑ хыҫҫӑн, колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх, планран ытлашши лашасене ытти колхозсене пӗр-пӗринпе каласса татӑлнӑ хаксемпе тата условисемпе сутма пултараҫҫӗ.

Ҫапла йӗрке тӑвас: колхозсем СССР Совнаркомӗн решенийӗпе килӗшӳллӗн СССР Наркомземӗн нарядӗсем тӑрӑх сутнӑ лашасем е СССР Оборона Халӑх Комиссариачӗ валли панӑ лашасем ҫав колхозсен лашасем ӗрчетмелли планне тултарнӑ шута кӗреҫҫӗ.

7. Колхозсем СССР Наркомземӗн Заготживконтори урлӑ хатӗрлев хакӗсем тӑрӑх ӑратлӑ лашасем сутсан, ҫав лашасене колхозсем государствӑна аш-какай панӑ шута кӗртме Хатӗрлев Халӑх Комиссариатне ирӗк парас, икӗ ҫултан иртнӗ элита класӗнче тӑракан кашни ӑратлӑ лашашӑн—400 килограмм аш-какай пани вырӑнне, пӗрремӗш класри лашашӑн—350 килограмм, иккӗмӗш класри лашашӑн — 300 килограмм аш-какай пани вырӑнне шутламалла.

Ҫапла йӗрке тӑвас: СССР Наркомземӗн Заготживконтори урлӑ ӑратлӑ лашасем илнӗ колхозсен государствӑна аш-какай памалли планран ирттерсе хӑйсем илнӗ лашасен чӗрӗ виҫи чухлӗ государство хакӗпе выльӑх-чӗрлӗхсем памалла е аш-какай вырӑнне, улӑштармалли эквивалентсем тӑрӑх, ытти тӗрлӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем памалла.

8. 1945 ҫултан пуҫласа ҫапла йӗрке тӑвас: государство тата хуҫалӑх организацийӗсем колхозсенчен лашасем СССР Совнаркомӗ йышӑннӑ решени тӑрӑх СССР Наркомземӗн хатӗрлев органӗсем (Заготживконторӑсем) урлӑ кӑна сутӑн илме пултараҫҫӗ.

9. Лашасене ӗҫ повинноҫне хутшӑнтарасси СССР Совнаркомӗ йышӑннӑ постановленисем тӑрӑх кӑна пулса пынине кура, вырӑнти совет тата ытти организацисене лашасем валли урӑх тӗрлӗ повинноҫсем тума, колхозсенчен сутӑн илнӗ пек туса лашасем илме тата колхозри лашасене законсӑр илсе тыткалама чарас, ҫав ӗҫшӗн айӑпа кӗрекен ҫынсене вырӑнтан кӑларса суда памалла тӑвас.

10. Колхозсене государствӑн лашасем ӗрчетмелли планне ирттерсе тултарнӑшӑн колхоз председателӗсене тата лашасем ӗрчетес ӗҫӗн заведующийӗсене ҫакӑн чухлӗ ӗҫкунӗсем ҫӗнӗрен хушса памалла тума сӗнес:

	Планла ирттерсе тултарни (процентпа)	Уйӑхсерен тӳлекен ӗҫкунӗсем сумне хушса тӳлемелле (процентпа)
Лашасен пӗтӗм хисепне ӳстерсен	1-рен 5 ҫити	5 процент
	5-рен 10 ҫити	10 процент
	10-ран малалла	25 процент

11. Лашасене начар пӑхса ырханлантарсан, ҫуранлатнӑ, ҫавӑн пекех тата хӑмпӑрахтарнӑ колхозниксенчен, колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх, ҫав колхозниксем ӗҫлесе илнӗ мӗнпур ӗҫкунӗсенчен 5—10 процент таран катса хӑварма колхозсене сӗнес.

Лашасене сусӑрлатнӑ е вӗлернӗ ҫынсенчен колхоз правленийӗсем, колхозниксен пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх, лаша хакне (хатӗрлев хакӗсемпе) виҫӗ хут ӳстерсе шыраса илме тивӗҫлӗ.

Лашасене лайӑх пӑхакан колхозниксене, хӑйсен ӗҫӗсене тума пӗтӗмӗшлӗ йӗрке тӑрӑх лаша панисӗр пуҫне, уйӑхра тата пӗрер кун пама юрать.

12. Облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикӑсен Совнаркомӗсене кашни районра государствӑн лашасем ӗрчетмелли планне ирттерсе тултарнӑ колхоз председателӗсене тата лаша фермисен заведующийӗсене ҫулсерен государство енчен 1000-шер тенкӗлӗх виҫӗ премии пама тата премипе пӗрле дипломсем пама хушас.

13. СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне лашасем ӗрчетес тӗлӗшпе уйрӑмах палӑрнӑ колхозниксене, специалистсене тата ҫӗрӗҫ органӗсен руководителӗсене наградӑламашкӑн «Отличник коневодства» ятлӑ кӑкӑр ҫине ҫакмалли значок тума ирӗк парас.

14. Колхозсенче лашасем ӗрчетес ӗҫре лашасен йышне анлӑн ӳстересси чи паха задача пулса тӑнине шута илсе, облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикӑсен Совнаркомӗсене колхозсенче кӗсресене мӗнле пӑхнине, вӗсене вӑхӑтра чуптарса хӑварнине тимлӗн сӑнаса тӑрассине организацилеме хушас. Ҫав ӗҫсене кашни кӗсререн ҫулталӑкне пӗрер тиха илес шутпа пурнӑҫа кӗртсе пымалла; колхозсен ӑйӑрсем пуррипе ҫуккине тӗрӗслемелле, чуптару ӗҫне йӗркелеме чи лайӑх ӑйӑрсене суйласа илмелле, ӑратлӑ ӑйӑрсен йышне ӳстерме тата ҫӗнетсе пыма ҫамрӑк тихасене пӑхса ҫитӗнтерес ӗҫе организацилемелле, ӑйӑрсене лайӑх пӑхса тӑрантарассине йӗркелемелле тата вӗсемпе чуптару

(Малалли 2-мӗш страницӑра)

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

кампанине хатĕрленсе иртгерĕ вăхăтра ĕçре усă курма чармалла.

15. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Брянск, Владимир, Дрогобыч, Калуга, Новосибирск тата Сумы облисполкомĕсене 1945 çулта асăннă облаçсенче государствăн лашасем ĕрчетмелли пĕрер витине организацилеме хушас.

Асăннă облаçсен исполкомĕсене государствăн лашасем ĕрчетмелли витисем валли çирĕп апат-çимĕç бази тумашкăн çителĕклĕ çĕр участокĕсем уйăрса пама тата вĕсене кирлĕ таран çуртйĕрсем тупса пама хушас.

16. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне государствăн лашасем ĕрчетмелли витисенчи ăратлă ăйăрсен йышне 2.669 пуçран 4.113 пуçа çити ÿстерме хушас.

17. Тихасем ытларах илсе çитĕнтерес шутпа, колхоз правленийĕсене çапла тума сĕнес: пĕтĕ тата тихаллă кĕсресемпе ĕçлекен колхозниксем валли çав ĕçсенчех ытти лашасемпе ĕçлеме тунă нормăсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ĕçлемелле нормăсем тума юрать, çакăнпа пĕрлех çав колхозниксене ĕçкунĕсем тивĕçлĕ пек ÿстерсе памалла; колхозсемпе совхозсенче тата лашасем тытакан ытти организацисенче чуптарса хăварнă кĕсресем пĕтĕленнипе пĕтĕленменнине çулсеренех август — октябрь уйăхĕсенче обязательнăй йĕркепе тĕрслесе тухмалла тата вĕсен хуçисене кĕсресем пĕттине кăтартакан хутсем çырса памалла; колхозсемпе совхозсенче тата ытти организацисенче пĕтĕ кĕсресемпе вĕсем хăмлаччен икĕ уйăх малтан тата хăмланă хыççăн 15 кунлăха кирек мĕнле ĕçре те усă курма чарас. Икĕ çултан пуçласа виçĕ çула çитиччен лашасемпе тата пĕтĕленнин 6 уйăх иртнĕ кĕсресемпе çăмăл ĕçсенче кăна ĕçлемелле.

Лашасене вăхăтран вăхăта обязательнăй йĕркепе кантармалла тăвас.

18. Чылай облаçсемпе крайсенче тата республикăсенче лашасемпе ĕçлес тата вĕсене пăхас ĕçри обезличкăна пĕтерменнине тата çакă вăл колхозсенче лашасем ĕрчетес ĕçе пысăк сиен кÿнине палăртса, облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, райисполкомсемпе парти райкомĕсене, колхозсен председателĕсемпе совхозсен директорĕсене пĕр уйăх хушшинче мĕнпур колхозсемпе совхозсенче лашасене вĕсен кÿлмелли хатĕрĕсемпе тата транспорт инвентарĕпе пĕрле лашапа ĕçлес тĕлĕшпе опыт пур колхозниксем çумне тата совхозсенчи рабочисем çумне тĕрĕслесе мĕнле çирĕплетсе тухнине пăхса тухма тата çав ĕçе халех пурнăçа кĕртме хушас.

Çапла йĕрке тăвас: лашасем çирĕплетсе панă колхозниксем е совхозсенчи рабочисем çав лашасемпе пур ĕçре те хăйсем кăна ĕçлеме пултараççĕ. Лашана тивĕçлĕ сăлтав пулсан кăна (унпа ялан ĕçлекен çын ăçта та пулин кайсан е чирлесен), колхоз правленийĕ ирĕк панă тăрăх е совхоз директорĕ хушнă тăрăх, урăх çынна пама юрать.

19. Лашасем ĕрчетессине лайăхлатас шутпа, 15 лашаран ытла тытакан колхозсене лашасем ĕрчетес ĕçĕн заведующине уйăрса лартма сĕнес; ун çине конюхсемпе ездовойсене суйласа илес ĕçе хумалла (кайран çав конюхсемпе ездовойсене колхоз правленийĕсен çирĕплетмелле), лашасене сыхласа упрас тата вĕсемпе ĕçре тĕрĕс усă курас, кĕсресене чуптарас, çамрăк тихасене пăхса çитĕнтерес, лашасене таканлаттарас, тата лашасем валли кÿлмелли хатĕрсемпе транспорт инвентарĕ тупса майлаштарас ĕçсене хумалла.

Лаша фермисем тытакан колхозсенче лашасем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен заведующин ĕçĕсене лаша фермин заведующийĕ çине, ытти колхозсенче вара — старши конюх çине хумалла тăвас.

20. Колхозсенче лашасем ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пынине государство енчен контроллесе тăрассине вăйлатас шутпа, облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене лашасем ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пынине районсем тăрăх, районсенче вара колхозсем тăрăх виçĕ уйăхра пĕрре государство енчен тĕрĕслесе тухма хушас; çав тĕрĕслÿсенче комиссисен лашасене пурне те пăхса тухмалла; комиссисен ĕçне тивĕçлĕ исполкомсен, республика Совнаркомĕсен тата зооветработниксен представителĕсем хутшăнмалла. Государство енчен тĕрĕслесе тухнин результачĕсене колхозсенче колхозниксен пухăвĕсенче тата райисполкомсенче сÿтсеявмалла, лашасем ĕрчетес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

21. Çĕрĕç органĕсенчи ветеринарипе зоотехника работникĕсене лашасене тăтăшах пăхса тухма хушас тата чирлĕ лашасемпе начар лашасене вĕсем ĕçе юрăхлă пуличчен ĕçрен хăтарма зооветработниксене ирĕк парас, çавăн çинчен колхозсен аллине распоряженисем çырса памалла тăвас. Зооветработниксем ĕçрен хăтарнă лашасемпе кирек кама та ĕçре усă курма чарас.

22. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, колхозсен правленийĕсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене лашасем валли чи лайăх апатсем çителĕклĕ таран уйăрса хăварма тума хушас.

23. Колхозсене 1945 çултан пуçласа лашасем валли ферма çумĕнчи участоксенче витере тытса усракан кашни лаша пуçне 0,1 гектар чухлĕ кишĕр, кăшман тата çĕрулми лартса хăварма сĕнес. Çав участоксенчи ĕçсене конюхсемпе ездовойсен туса ирттермелле; вĕсене лашасем валли сĕткенлĕ апатсем акса тунăшăн, ĕçкунĕсем шутласа панисĕр пуçне, планран иртгерсе пухса илнĕ тымар-çимĕçсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайне памалла.

Çапла йĕрке тăвас: фермăсем çумĕнчи участоксенче конюхсемпе ездовойсем ĕçлесе тăвакан мĕнпур тымар-çимĕçсемпе çĕрулми пĕтĕмĕшпех лашасене тăрантарнă çĕре каяççĕ.

24. Лашасене çул çинче кантарма тата тăрантарма тивĕçлĕ условисем туса парас шутпа, Центросоюза, облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикăсен Совнаркомĕсене лашапа çÿрекен тĕп çулсем çинче тата район центрĕсенче лашасем тăратса çĕр каçармалли çуртсем тума хушас; çав çуртсен картишĕсенче лупасайсем тата лашасене шăварма шыв, çавăн пекех колхозниксене канмалли тата чей ĕçмелли çуртсем пулмалла.

Инçе çула грузсем турттаракан колхозсен, лашасем валли апат пухса хурас шутпа, утă хатĕрлесе, çав утта лашасем тăратса çĕр каçмалли çуртсенче сыхласа усрассине организацилемелле, çав утта кайран, райисполкомсем çирĕплетнĕ йĕркепе тăрăх, колхозсене парса тăмалла.

25. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне 1945 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа уйăхра пĕрре тухакан «Коневодство» ятлă виçĕ печатнăй лист пысăкĕш журнала çĕнĕрен кăларма тытăнма ирĕк парас.

II. МАЙРАКАЛЛА ШУЛТĂРА ВЫЛЬĂХСЕМ ĔРЧЕТЕС ЕНĔПЕ

1. Государствăн колхозсенче майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли 1945 çулхи планне, пĕтĕм выльăхсен йышне 11 процент чухлĕ ÿстермелле туса, вăл шутра ĕнесен йышне 12 процент, ĕç вăкăрĕсен йышне 24 процент чухлĕ ÿстермелле туса, çирĕплетес тата колхозсенче кастарнă вăкăрсем çитĕнтермелли плана облаçсемпе крайсем тата республикăсем тăрăх çирĕплетес.

2. Государствăн майракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетмелли 1945 çулхи планне, Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем тăрăх пĕтĕм выльăхсен йышне 11 процент, вăл шутран ĕнесен йышне—8 процент, Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем тăрăх—12 процент, вăл шутран ĕнесен йышне—7 процент, Аш-какайпа Сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕсен совхозĕсем тăрăх—23 процент, вăл шутран ĕнесен йышне—45 процент, Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн совхозĕсем тăрăх—12 процент, вăл шутран ĕнесен йышне—6 процент, промышленность Халăх Комиссариачĕсен подсобнăй хуçалăхĕсем тăрăх—8 процент, вăл шутран ĕнесен йышне—12 процент чухлĕ ÿстермелле туса, çирĕплетес.

3. Колхозсенче 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх фермисем валли колхозниксенчен пăрусем сутăн илмелли плана, 1.553 пин пуç илмелле туса, çирĕплетес.

4. Колхозсене çапла тума сĕнес: выльăх-чĕрлĕх фермисем валли колхоза панă кашни пăрушăн колхозниксене государство илекен хакпа тÿлемелле, унсăр пуçне тата, колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕ йышăннă тăрăх, колхоз государствăна тĕштырă парса татнă хыççăн, колхозник панă пăрăвăн чĕрĕ виçин кашни килограммĕшĕн пĕрер килограмм тĕштырă памалла е, утă çине куçарса шутласа, 10 килограмм шултăра апат памалла, е тата 6 уйăхран иртгерсе панă кашни пăрушăн колхозникĕн государствăна аш-какай памалли обязательствине колхоз хăй çине илет, анчах çав обязательствăн виçи колхозник хуçалăхĕ валли тунă çулталăкри нормăран иртмелле мар.

5. Облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене вăрçă вăхăчĕ валли тунă йĕркене—çитĕннĕ выльăхсене, çавăн пекех тата пĕр çула çитмен çамрăк выльăхсене те, куçкĕретĕнех курăнса тăракан юрăхсăр выльăхсемсĕр пуçне, райçĕрĕç пайĕ ирĕк памасăр пусма е сутма чаракан йĕркене колхозсенче мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине контроллесе тăрассине вăйлатма хушас.

6. 1945 çулта колхозсенче кашни тăрантаракан ĕнерен сĕт суса илмелли плана, майракаллă шултăра выльăхсене кĕтÿре çÿретсе тата витере тăрантарса самăртмалли плана облаçсемпе крайсем тăрăх çирĕплетес.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене 1945 çулхи июнĕн 1-мĕшĕччен колхозсенче государствăна 1945 çулăн III-мĕшпе IV-мĕш кварталĕсенче пама тивĕçлĕ выльăхсене суйласа илессине тата çав выльăхсене чи лайăх çарансем çинче тăрантарса самăртассине организацилеме хушас.

7. Кĕтÿре çÿренĕ вăхăтра выльăхсем валли симĕс курăк хатĕрлесе хурас шутпа тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартас шутпа, колхозсене выльăхсем валли симĕс курăк çулма тата кĕтÿ кĕтме пĕр çул ÿсекен курăксемпе нумай çул ÿсекен курăксем, пахчасенче ÿстерекен культурăсем акма, çавăн пекех тата çуркуннехи вăхăтра силос хывассине организацилеме, кĕтÿ кĕтмелли выранĕсенче курăк çителĕксĕр пулсан, выльăхсене силоспа тăрантарма сĕнес.

8. 1945 çулта колхозсемпе колхозниксен ĕнисене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли плана, пĕтĕмпе 600 пин пуç пĕтĕлентерме палăртса, çирĕплетес.

Облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсенче государствăн тата районăн ăратлăх кĕнекисене çырса хунă тата çав кĕнекесем çине çырса хума тивĕçлĕ аçа выльăхсемпе май килнĕ таран туллинрех усă курмалла тума хушас, çавăн пекех тата ăратлă аçа выльăхсем çителĕксĕр районсенче ялхуçалăх выльăх-чĕрлĕхĕсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерессине анлăн сарма хушас.

9. Облисполкомсемпе крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене 1945 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕччен райçĕрĕç пайĕсемпе госплемрассадниксенчи зоотехниксен шутĕнчен ялхуçалăх выльăх-чĕрлĕхĕсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес тĕлĕшпе ĕçлекен инструкторсене вĕрентсе хатĕрлеме хушас, çавăн пекех тата выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес тĕлĕшпе ĕçлекен кашни пунктра пĕр çын тивĕçмелле туса выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене вĕрентсе хатĕрлеме хушас. Выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерес тĕлĕшпе ĕçлекен инструкторсемпе техниксене вĕрентсе хатĕрлес ĕçпе çыхăннă расходсене выранти бюджет çине йышăнмалла.

10. СССР Стройматериалсен Наркоматне, Резина промышленность Наркоматне, Хĕçпăшал промышленность Наркоматне, Хими промышленность Наркоматне, РСФСР Наркомпросне, СССР Наркомпищепромне, СССР Наркомлегпромне ялхуçалăхĕнчи выльăх-чĕрлĕхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерекен пунктсем валли 1945 çулхи пĕрремĕш çурçулта (çирĕплетнĕ план тăрăх) оборудовани туса кăларса СССР Наркомземне пама хушас.

11. Колхозсемпе совхозсенче ама выльăхсем хĕсĕр пулассине пĕтерес шутпа, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене, райкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) кашни колхозпа совхоза кастарман вăкăрсем мĕн чухлĕ кирлине тата вĕсем мĕн чухлĕ пуррине шута илмелле, колхозсемпе совхозсен тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен мĕнпур ама выльăхĕсене чуптарма кирлĕ чухлĕ вăкăрсем тупас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла;

б) 1945 çулта колхозсемпе совхозсен тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен ама выльăхĕсене пĕтĕмĕшпех чуптарма кирлĕ чухлĕ вăкăрсем ÿстерес тĕлĕшпе пĕр уйăх хушшинче кашни района, районсенче вара кашни колхозпа совхоза заданисем палăртса памалла;

в) 1945 çулхи апрель уйăхĕнче зоотехниксенчен, ветврачсенчен тата çĕрĕç работникĕсенчен тăракан комиссисен колхозсемпе совхозсенчи кастарман вăкăрсен пахалăхне тĕрĕслесе тухмалла, чуптарас ĕçре çав вăкăрсемпе тĕрĕс усă курассине организацилемелле тата, вăкăрсене пĕр маях мăнтăр тытса усрас тесе, вĕсене тăрантарассине лайăхлатмалла.

12. 1945 çулта совхозсенчен ăратлă ĕне выльăхсем 22 пин те 629 пуç сутма палăртса, план çирĕплетес.

13. 1945 çулта облаçран облаçа ăратлă ĕне выльăхсем 14.535 пуç куçарса килме палăртса, план çирĕплетес.

14. Çакăн пек йĕрке тăвас: колхозсем Заготживконтора урлă ăратлă выльăхсем сутсан, çав выльăхсене колхоз государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарнин шутне кĕртеççĕ.

15. СССР Наркоммясомолпромне çапла тума хушас: подсобнăй хуçалăхсем СССР Наркомземĕн Заготживконторине ăратлă выльăх параççĕ пулсан, çав выльăха государствăна аш-какай пани шутне кĕртмелле; СССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн хуçалăхĕсене вара вĕсем Заготживконторăна панă ăратлă выльăхшăн, чĕрĕлле килограмшăн килограмм шутласа, тивĕçлĕ чухлĕ ăратсăр выльăхсем памалла.

16. СССР Наркомземне, Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Наркоммясомолпромне, СССР Наркомпищепромне, Наркомвнешторгне тата подсобнăй хуçалăхсем тытакан промышленноçлă мĕнпур наркоматсене, СССР Госпланĕн Центрти Статистика Управленийĕпе пĕрле, колхозсенчи, совхозсенчи, подсобнăй хуçалăхсенчи, единоличниксен хуçалăхĕсенчи тата колхозниксен, рабочисемпе служащисен килĕсенчи выльăх-чĕрлĕхсене 1945 çулхи июнь—июль уйăхĕсем хĕлне ăратсем тăрăх шута илсе тухма хушас.

17. Мĕнпур колхозсем, совхозсем, вырансенчи совет тата çĕрĕç органĕсем умне çакăн пек задача лартас: 1945 çулта кашни колхозпа совхозрах обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ чухлĕ çуртйĕрсем хатĕрлемелле, çав çуртйĕрсене выльăхсен йышĕ тата вĕсен тухăçлăхĕ малалла ÿсессине шута илсе хатĕрлемелле.

Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсем çителĕклипе çителĕклĕ маррине икĕ уйăх хушшинче кашни колхозрах тĕрĕслесе тухмалла, çавăн чухне вăл çуртйĕрсем мĕнлине тата вăл çуртйĕрсене аслăлатас, тивĕçлĕ йĕркене кĕртес тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсенче мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса акт çырмалла.

18. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас: колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çуртйĕрсене çуллахи вăхăтра, выльăхсем кĕтÿре çÿренĕ чухне, хатĕрлемелле, çакна тума ятарласа бригадăсем уйăрмалла; выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсас тата ăшă тытакан тăвас ĕçе кĕрхи сивĕсем ир килекен районсенче октябрĕн 1-мĕшĕччен, ытти районсенче вара октябрĕн 1-мĕшĕччен пĕтĕмĕшпех вĕçлемелле.

III. СУРĂХСЕМПЕ КАЧАКАСЕМ ĔРЧЕТЕС ЕНĔПЕ

1. 1945 çулта колхозсенче сурăхсем ĕрчетмелли плана сурăхсемпе качакасен хисепне 11 процент чухлĕ ÿстермелле туса çирĕплетес.

2. 1945 çулта СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсенчи сурăхсем ĕрчетмелли плана сурăхсемпе качакасен хисепне 17 процент чухлĕ, Наркомпищепром совхозĕсенче 14 процент, Наркомвнешторг совхозĕсенче 7 процент, Наркоммясомолпром совхозĕсенче 23 процент чухлĕ ÿстермелле туса тата промышленноçлă наркоматсен подсобнăй хуçалăхĕсенче 23 процент чухлĕ ÿстермелле туса çирĕплетес.

3. 1945 çулта колхозсенче сурăхсене кĕтÿре çÿретсе самăртмалли плана облаçсемпе крайсем тата республикăсем тăрăх палăртса çирĕплетес.

4. 1945 çулта колхозсемпе колхозниксен сурăхĕсемпе качакисене 5.610 пин пуç искусственнăй майпа пĕтĕлентермелле туса, план çирĕплетес.

5. 1945 çулта Совхозсен Халăх Комиссариачĕпе Наркомвнешторгăн совхозĕсенчен 36.710 пуç ăратлă сурăхсемпе качакасем сутмалла тăвас.

6. 1945 çулта колхозсене сутма облаçран облаçа 29.050 пуç качакапа сурăх турттарса кайма палăртса, план çирĕплетес.

7. 1945 çулта колхозсенче сурăхсене вĕтĕ çăмлă, вăтам çăмлă, каракуль ăратлă тата романовски ăратлă такасемпе чуптарса, метиссемпе таса ăратлă сурăхсем ĕрчетмелли плана çирĕплетнĕ.

8. Сурăхсем кĕçĕпе тата шĕвĕрлчен чирĕпе чирлессине пĕтĕмĕшпех чарса лартас шутпа, облисполкомсене, крайисполкомсене тата республикăсен Совнаркомĕсене çапла тума хушас: кĕçĕ ернĕ тата кĕçĕ ернĕ пек туйăнакан пур сурăхсене те 1945 çулта кĕçĕрен сыхлас тĕлĕшпе ятарласа çумалла, çунă сурăхсем валли кĕтÿ кĕтмелли таса вырансем, дезинфекци тунă çуртйĕрсемпе инвентарьсем хатĕрлемелле; çавăн пекех тата шĕвĕрлчен чирĕпе чирленĕ сурăхсене сыватас тĕлĕшпе те тивĕçлĕ ĕçсем туса иртгермелле.

9. Сурăхсемпе качакасем ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ çумĕнче, Казахстанри выльăх-чĕрлĕх институчĕ тата Çĕпĕрти выльăх-чĕрлĕх институчĕ çумĕнче 1945 çулта бонитерсен çулталăклăх шкулĕсене организацилеме СССР Наркомземне ирĕк парас, вăл шкулсенче кашнинчех 30-шар çын вĕрентмелле. Бонитерсен шкулĕсене аслă шкул вĕренсе пĕтернĕ тата сурăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе практикăра нумай ĕçленĕ специалистсене илмелле. Бонитерсен шкулĕсенче вĕренекенсене кашнинех уйăхра 400-шер тенкĕ стипенди памалла тата вĕсем хăйсем ĕçленĕ çĕрте илекен ĕçукçине сыхласа хăвармалла.

IV. СЫСНАСЕМ ĔРЧЕТЕС ЕНĔПЕ

1. 1945 çулта колхозсенче сыснасем ĕрчетмелли государство планне сыснасен хисепне 37 процент чухлĕ ÿстермелле туса çирĕплетес.

2. 1945 çулта совхозсенче сыснасем ĕрчетмелли плана сыснасен хисепне Совхозсен Халăх Комиссариачĕн совхозĕсенче 76 процент, Наркоммясомолпром совхозĕсенче 111 процент, Наркомпищепром совхозĕсенче 35 процент, Наркомвнешторг совхозĕсенче 7 процент тата промышленноçлă наркоматсен подсобнăй хуçалăхĕсенче 19 процент ÿстермелле туса çирĕплетес.

3. 1945 çулта колхозсенче сысна çурисем илмелли плана облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх палăртса çирĕплетес.

4. Государствăна сысна какайĕ тата ытти выльăхсен какайĕ выранне пама 1945 çулта колхозсенче сысна самăртмалли плана облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх палăртса çирĕплетес.

5. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, ВКП(б) обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене колхозсем валли план туса панă чухне пĕрремĕш тата иккĕмĕш çурçулсенче сысна самăртса памалли заданисене палăртса пама хушас.

6. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене çапла тума ирĕк парас: аш-какай памалли обязательствăсене тултарса пыракан тата сысна ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртекен колхозсенче СССР Наркомземĕн Заготживконтори урлă çамрăк выльăхсем сутăн илме юрать; çав çурăсене çителĕклĕ таран выльăх апачĕ тытакан, анчах сыснасем кирлĕ чухлĕ усрайман колхозсене сысна фермисене вăйлатма тата сыснасене самăртма памалла.

7. СССР Наркоммясомолпромне çапла тума хушас: Заготскот конторисене илме пынă сыснасене, вĕсем ĕрчетес ĕçре усă курма юрăхлă пулсан, сыснасен таварлă фермисене организацилекен е вĕсене самăртакан колхозсене ытти выльăхсемпе улăштарса памалла; çакăн чухне халиччен пулнă эквивалентсемпе усă курмалла.

8. Обязательствăна тултарас шутпа çĕрулми выранне колхозсенчен самăртнă сыснасем илме Наркомзага ирĕк парас; çакăн чухне сыснан чĕрĕ виçин пĕр килограмне 20 килограмм çĕрулмишĕн шутласа илмелле; анчах та промышленноçлă хуласем çывăхĕнчи районсенчи, çавăн пекех тата эрех заводĕсемпе крахмал заводĕсене çĕрулми парса тăракан районсенчи колхозсенчен çĕрулми выранне сыснасем улăштарса илме юрамасть.

9. СССР Наркомземне çапла тума хушас: колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн пыракан социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тунă чухне облаçсем, крайсем тата республикăсем сысна ĕрчетмелли плана мĕнле тултарнине тата колхозсем сысна самăртмалли тата обязательнăй поставкăпа шучĕпе сысна какайĕ памалли заданисене мĕнле пурнăçа кĕртнине шута илмелле.

10. СССР Наркомзагне аш-какай обязательстви шучĕпе сыснасем илмелли халиччен пулнă эквивалентсене улăштарма тата çакăн пек йĕрке тума хушас: аш-какай обязательствисене пурнăçа кĕртнĕ чухне сыснасене çак йĕркепе йышăнмалла: салă тума самăртнă сыснан чĕрĕ виçин 600 грамне, çурма-салă тата бекон тума самăртнă сыснан чĕрĕ виçин 650 грамне, 75 килограмран ытларах туртакан сыснасен 700 грамне, 50 килограмран пуçласа 75 килограмм таран туртакан сыснасен 800 грамне тата 30 килограмран пуçласа 50 килограмм таран туртакан сыснасен 900 грамне обязательствăра кăгартнă пĕр килограмм чухлĕ аш-какай панă тесе йышăнмалла.

11. Самăртмашкăн пысăк тухăçлă сыснасем ÿстерсе илес шутпа, колхозсенче пĕр ăратлă сыснана тепĕр ăратлă сыснала чуптарма, çакăн чухне салă валли ÿстерекен ăратлă сыснасемпе усă курма сĕнес.

12. 1945 çулта ăратлă сыснасем 16.500 пуç сутма палăртса тата облаçран облаçа ăратлă сыснасене 9.160 пуç турттарса пыма палăртса, план çирĕплетес.

13. Совхозсемпе колхозсем выльăх-чĕрлĕх самăртас ĕçре тунă чи лайăх çитĕнÿсене анлăн кăтартас шутпа, СССР Наркоммясомолпромне, СССР Наркомземне тата СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне 1945 çулхи кĕркунне Мускаври, Полтаври, Краснодарти тата Новосибирскри аш-какай комбиначĕсем çумĕнче самăртнă выльăх-чĕрлĕхсен выставкисене организацилеме хушас.

Чи лайăх экспонатсемшĕн колхозсемпе совхозсене премилеме 1945 çулта СССР Наркомземĕн смети тăрăх 2 миллион тенкĕ, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн смети тăрăх 1 миллион тенкĕ, СССР Наркоммясомолпромĕн смети тăрăх 1 миллион тенкĕ тата СССР Наркомпищепромĕн смети тăрăх 500 пин тенкĕ укçа уйăрса парас.

(Юлашки çитес номерте пулать).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă тăрăх, Голландире, Немегенран çурçĕртерехре, союзниксен çарĕсем анлă фронтра Рейн шывĕн анатри юхăмĕ патне çитнĕ. Твенте каналĕнчен çурçĕртерехре союзниксем Хенгело хулине тасатнă. Кунтан çурçĕртерехре Нордхорнран наступлени туса пыракан бронетанковăй чаçсем темиçе тĕлте Эмс шывĕ патне çитнĕ. Оснабрюк хулине союзниксем йышăннă, анчах нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатса çитереймен-ха. Мюнстер хулинче союзниксем 1.700 çынна ытла тытăна илнĕ.

Рур «миххин» çурçĕр вĕçĕнче союзниксен пехоти чаçĕсем, Дортмунд—Эмс каналĕ урлă каçса, Люнен хулинчен 2,5 километр хĕвеланăçнерехре ларакан пункт патне çитнĕ. Рур «миххин» хĕвелтухăç вĕçĕнче союзниксен танкĕсем Гильдфельд тата Гренебах хулисем патне çитнĕ.

Бад-Эйнхаузен çывăхĕнче союзниксен çарĕсем Везер шывĕ патне çитнĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Лемго районĕнче Вег шывĕ хĕррине тухнă, 4.000 çынна тытăна илнĕ. Кассель хулине тăшманатан тасатнă.

Союзниксен танковăй чаçĕсем Мюльхаузен хулинчен 4 миля кăнтăртаралла ларакан Обердорл хулин хĕррине çитнĕ. Союзниксен Фульда шывĕ урлă каçнă пехота чаçĕсем Эйзенах хулинчен 22,5 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан пункт патне çитнĕ. Малта пыракан бронетанковăй чаçсем Гота хулине тасатнă тата Ордлуф хулине кĕрсе кайнă.

Зиген хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пысăк мар темиçе хулана тăшмантан тасатнă. Ашаффенбург хулишĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 4.000 çын пĕтни çинчен пĕлтереççĕ.

Штаб пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, союзниксем çавăн пекех Вюрсбург, Оксенфурт тата Гельбронн хулисен районĕсенче те малалла куçнă. Апрелĕн 3-мĕшĕнче союзниксем 28.817 çынна тытăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕМ ОСНАБРЮК ХУЛИНЕ ЙЫШĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔРЕХХЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин пысăк чугун çул центрне Оснабрюк хулине союзниксем йышăннă чухне нимĕçсем вĕсене питĕ сахал хирĕç тăнă. Акăлчансен 11-мĕш танковăй дивизийĕ апрелĕн 3-мĕшĕнче вăл хулана хупăрласа илнĕ.

Нимĕçсем, çав тери çухалса кайнă пирки, фронт ăçта пуçланса ăçта пĕтнине те пĕлмеççĕ. Хăшпĕр чухне вĕсем союзниксен тылри позицийĕсене атакăлаççĕ, ку — фронтăн малти линийĕ пуль, тесе шутлаççĕ. Тĕрĕссипе илсен, фронт çав вырăнтан 50 миля инçерехре тăрать.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пит пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Бомбăсем пуринчен ытла Мерзербургпа Гамбургри синтетически горючи завочĕсем çине пăрахнă. «Москито» йышши самолетсем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, америкăнецсен 1.200 йывăр бомбардировщикĕ ытла, 600 истребитель ытла хÿтĕлесе пынипе, апрелĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла Кăнтăр-хĕвелтухăç Германири пысăк çар склачĕсене тата ытти объектсене тапăннă.

ЛОНДОНРА БРИТАНИ УШКĂННЕ КĔРЕКЕН ХАЛĂХСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УÇĂЛНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 4-мĕшĕнче Британи ушкăнне кĕрекен халăхсен Лондонри конференцийĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Инди вице-королĕ çумĕнчи исполнительнăй совет членĕ, Инди делегацийĕн руководителĕ Рамасвами Мудалиар пулман. Лондона вăл апрелĕн 4-мĕшĕнче каçхине кăна пырса çитнĕ.

Конференцин пĕрремĕш кунĕнче хатĕрленÿ ĕçĕсене тунă пуль тесе шутлаççĕ. Конференци тĕллевĕ—апрелĕн 5-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференци умĕн пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене каласа парасси пулать.

Конференци пĕрремĕш кунне кăнтăрла иртсен мандатлă территорисене пĕтĕм тĕнчери организаци пăхса тăрасси çинчен сÿтсе-явнă.

ЯПОНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ТОКИО, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви Японин информаци бюровĕ пĕлтернине парать. Пĕлтерÿре çапла каланă: «Лару-тăру йывăррине шута илсе тата вăйлăрах правительство туса хума май парас тесе, министрсен кабинечĕ вырăнтан тухма йышăннă. Çав решени тăрăх, Койсо премьер-министр панă пĕтĕм кабинет вырăнтан тухасси çинчен императора заявлени панă».

ЯПОНИ КАБИНЕТНЕ ТУСА ХУМА СУДЗУКИ АДМИРАЛА ХУШНА

ТОКИО, апрелĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çĕнĕ кабинет туса хума император Судзуки адмирала хушнă.

КĔСКЕН

* Канадăн «Аннан» ятлă фрегачĕ Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнче нимĕçсен подводнăй лодкине путарнă.

* Социалистсен партийĕн парламент членĕсем пулса ĕçленĕ 400 членĕ ытла Аргентинăри муниципалитетсемпе профсоюзсен работникĕсем заявлени пичетлесе кăларнă. Унта вĕсем Аргентинăра конституциллĕ йĕрке туса хурас шутпа демократиллĕ пур вăйсене те пĕрлешме чĕнеççĕ.

* Египет, Сауд Аравийĕ, Сири, Ливан, Ирак тата Трансиордани представителĕсем Каир хулинче араб çĕршывĕсен Лигин уставĕ çине алă пуснă. Лигăн генеральнăй секретарĕ пулса ĕçлеме Аззам-Бея уйăрса лартнă.

* Стокгольм çар округĕн гражданла оборонин начальникĕн заместителĕ пулнă Эйнар Хагмана Стокгольмри хула сучĕ нимĕç шпионĕ пулнăшăн ĕмĕрлĕхе каторгăна ямалла тунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00559 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000